**Шурă-шурă акăшсем**

Шурă-шурă акăшсем
Тӳпене çĕкленнĕçем
Акăш пек ачаш саспа
Эп калатăп сан ятна,
Мамăк пек çунатăмпа
Туртăнатăп сан патна,
Савниçĕм.

Çăлтăр куçлă чечексем
Ыйхăран вăраннăçем
Чечекле чеченлĕхпе
Эп калатăп сан ятна,
Çамрăк çĕмĕрт çеçки пек
Сĕртĕнетĕп кантăкна,
Савниçĕм.

Пахчари сар кайăксем
Юррине пуçланăçем
Сарă кайăк чĕлхипе
Эп калатăп сан ятна,
Сар хĕвел пек чĕрӳпе
Ïнланан-ши эс мана,
Савниçĕм?

*Сементер, Ю. Шурă-шурă акăшсем : [сăвă] / Ю. Сементер // Чăваш литературин антологийĕ. – Шупашкар, 2013. – [Т. 2] : Поэзи. – С. 436.*